# Тĕп Саккун халăхшăн пултăр

ÇАПАХ ТА телейлĕ çынсем эпир. Пурнăçăмăрта мĕн çитмесен те, Конституцисĕр пурăнмастпăр. Çитменнине тата кашни ўсĕмĕн хăйĕн Конституцийĕ. Американецсемех ав йăх пуçĕсем пурăннă Конституципе паян кунччененех пĕр улăштармасăр усă кураççĕ. Тепĕр çĕршывра вара Тĕп Саккун пачах çук.

Сталин Конституцине эпĕ шкулта вĕреннĕ. Уйрăм предмет пулнă вăл. Брежнев Конституцине сўтсе явма хутшăннă. Тĕнчери чи хулăн Конституци ĕмĕрĕ чи вăрăмми пулаймарĕ çав. Йăли çапла-çке пирĕн. Çĕршывăн чи аслă пуçлăхĕ пулса тăракан кашни çын хăйне валли Конституци йышăнма тăрăшать. Ельцин та унсăр юлас темерĕ. Халăха пусахласа йышăнтарчĕ-йышăнтарчех. Халь тин ним те тăваймастăн, суверенлă Чăваш Республикин те хăйĕн çĕнĕ Тĕп Саккунне йышăнмаллах. Проекчĕ пичетленсе тухрĕ. Халиччен пулнисемпе ăна мĕн пĕрпеклетет-ха? Кунта та, ыттисенчи пекех, чи час тĕл пулакан сăмах вăл - «халăх».

Уйрăм пайсемпе статьясене хак парса тăрас теместĕп. Хăвна майлă çавăрма пĕлсен, кашни статьях ырă та, усал та тума ирĕк парать. Адольф Гитлера Германи Конституцийĕн пĕр статйи кăна кирлĕ пулнă. Унпа усă курса вăл фашизм тытăмне çирĕплетнĕ. Çав статья ăна чрезвычайлă лару-тăрура пĕтĕм влаçа пĕр çын аллине панă. Çакнашкал вырăнсем Чăваш Республикин Конституцийĕн проектĕнче те çук мар. Акă 37-мĕш статьяна вулатпăр: «Чăваш Республикин Патшалăх Пухăвне салатса яраccине пурнăçлать». Кам тетĕр? Чăваш Республикин Президенчĕ.

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ те уйрăм çын влаçне çирĕплетет. Патшалăх Пухăвне Президент çумне çыхса хуни çавна пĕлтермест-и-ха? АПШ Президенчĕ Конгресс еннелле пăха-пăха илсех тăрать. Раççей Патшалăх Думи вара Президент çилли тулса çитесрен хăракаласа ĕçлет. Килĕшмерĕ тĕк - салатать те ярать. Эпир тахçанах ĕнтĕ саккунсен вăйĕпе мар, Президент Указĕсемпе пурăнатпăр. Ман шутпа, саккун кăларакан органăн ирĕклĕ пулмалла. Ĕç тăвакан орган хыççăн кăна утмалла мар. Юрĕ, паян Президент пур енĕпе те кăмăллă, çынлăха çухатман тейĕпĕр. Ыранах урăххи пулма пултарать. «Патшалăх вăл - эпĕ» теме юратаканни тупăнсан пуçланчĕ вара ахăр самана. Ăна хăйĕн мĕн пур юнтармăшĕсене пурнăçа кĕртсе пыма никам та чараймĕ. Конституци ирĕк парать ăна.

Сăмах май тата çакна та калам-ха. Мĕн сăлтава пула пирĕн саккун кăларакан, халăх суйлакан органа Патшалăх Пухăвĕ темелле-ха? Суверенлă республикăн саккун кăларакан органĕ наци тумĕпе çўрени вырăнлăрах мар-и? Сейм, вече, рада, хурал пур пулсан мĕншĕн Канаш пулмалла мар? Ăна вырăсла куçарни ытлашши. Мĕн пур халăхшăн вăл КАНАШ пултăр. Конституци комиссийĕ ячĕпе çырнă ăнлантару çырăвĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров çак проект «Чăваш Республикин историри уйрăмлăхĕсене тата хăй евĕрлĕхне палăртса тăрать» тесе çырать. Çав хăй евĕрлĕх шăпах чăваш тумĕнче пулмалла пек туйăнать.

Кăçал «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» Саккун йышăннăранпа пилĕк çул çитет. Анчах, саккунра каланă пек, патшалăх влаçĕпе управлени органĕсенче çыру ĕçĕсене чăвашла туса пыма тытăнман, сессисенче, лару-сенче, ытти ĕçлĕ канашлусенче чăваш сăмахне çаплах илтейместпĕр-ха. Малашне те пулмĕ ку. Чăваш Республикин Конституцине çак халлĕнех йышăнсан вăл та пулăшмĕ. Президент пулма «Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисене пĕлекен» /4-мĕш сыпăк, 34-мĕш статья/ çынна суйлатпăр пулсан Вице-президентăн вĕсене пĕлмелли, пĕлмелле марри пирки проектра каламан. Тепĕр чухне çырса хуманни çырнă сăмахран та пĕлтерĕшлĕрех иккен. Кунта унччченхи йăласенех тытса пырас тени куç кĕретех. Обкомăн, кайран рескомăн та, пĕрремĕш секретарĕ чăвашлах калаçакан çын пулнă. Иккĕмĕшне кам пулсан та вырăса суйланă. Пирĕн кăна мар, Украинăпа Казахстан пек пысăк республикăсенче те влаçри иккĕмĕш çын вырăс пулнă. Вице-президентăн та чăвашла пĕлмеллине палăртса хăвармаллах. Унсăрăн Президентăн йышлă аппарачĕ çаплах вырăсла çырма, вырăсла калаçма пăрахмĕ, патшалăх чĕлхи тесе мăшкăллакан тăван чĕлхемĕре «пысăк» суртăн алăкĕнчен те кĕртмĕ.

Чăваш чĕлхине «националистсем» кăна хўтĕлесе калаçни çителĕксĕр, ун хутне кĕрекен пĕр сумлă статья та тĕл пулаймарăм пулас Тĕп Саккунра. Хальхи лару-тăрăва шута илсен вăл тем пекех кирлĕччĕ. Чăваш чĕлхин сумĕ унччченхинчен те чакса кайнă пек туйăнать. 8-мĕш статьяра çырса хунă-ха: «Чăваш Республикинче чăваш тата вырăс чĕлхисем патшалăх чĕлхисем шутланаççĕ». Ку ĕнтĕ Конституцире çырнă вĕт теме кирлĕ. Урăх ним тума та мар. Чĕлхе Конституцирен хăйĕнчен пысăкрах патшалăх символĕ пулса тăрать. Çавăнпа Чăваш патшалăх чĕлхи чăваш чĕлхи кăна пулмалла. Вырăс чĕлхине республика патшалăх чĕлхи туса мĕскĕнлетме кирлĕ мар. Вăл тахçанах хутшăну чĕлхи пулса тăнă. Хутшăну чĕлхин статусĕ республикăн патшалăх чĕлхин статусĕнчен пысăкрах.

Конституци комиссийĕ малалла ĕçлет. Халь ĕнтĕ, Тĕп Саккун проекчĕ пичетленсе тухнă хыççăн, унта сĕнўсем ытларах пыма тытăнĕç. Президент кăна мар, чăваш халăхĕ хăй Конституциллĕ /Тĕп Саккунлă/ пултăрччĕ.

**Денис ГОРДЕЕВ.**